27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
ДЕКАБРЬ
16
ШАМАТКУН
245(6740) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Колхоз фермисенче выльӑх апатне перекетлӗн тыткалассишӗн

Выльӑхсене юратса пӑхни, зоотехникӑпа ветеринари вӗрентӗвӗсене яланах пурнӑҫласа пыни, ӑшӑ, ҫутӑ тата типӗ ҫурт-йӗрсенче усрани выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Анчах та, ҫавсемпе пӗрлех, выльӑх апачӗ ҫителӗклӗ пулни кирлӗ.

Малта пыракан колхозсен вылӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫри ҫитӗнӳвӗсем мӗнрен килнине сӑнаса пӑхсан, унта выльӑх апачӗ ҫителӗклине тата вӑл апата перекетлӗн тыткаланине куратӑн. Ҫӗрпӳ районӗнчи «Ӗмӗт» колхоз выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетессипе лайӑх ӗҫленӗшӗн Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илнӗ. Ҫак колхоз нумай колхозсемшӗн пример пулса тӑрать. Кунта кашни выльӑха, кашни кун мӗн ҫитермеллине тӗплӗн ҫырса, курӑнакан вырӑна ҫакса хунӑ. Кунта тӗштырӑ, утӑ е улӑм, пӑтратса е типӗлле, тымар-ҫимӗҫ е силос ҫитермеллине зоотехник кӑтартса панӑ. Утӑ юлашкисене тислӗк ҫине нихӑҫан та кӑларса тӑкмаҫҫӗ, ӑна уйрӑм ҫӗре пуҫтарса хураҫҫӗ, кирлӗ пулсан, пӑтратса ҫитереҫҫӗ. Выльӑхсене апат мӗнле ҫитернине тата ҫитерме пӑхнӑ нормӑна пӗтӗмпех расходланине колхоз председателӗ, зоотехник е правлени членӗсем тӗрӗслесе тӑраҫҫӗ. Ҫак колхозри выльӑхсем яланах тутӑ, вӗсем самӑр та вӑйлӑ. Ҫавӑнпа та кунта выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана ҫулран-ҫул ытлашшипех тултарса пыраҫҫӗ. Муркаш районӗнчи «Красное Сормово» колхоз вӑйлӑ тырпул тунипе кӑна мар, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана тултарнипе тата унӑн тухӑҫлӑхне яланах ӳстерсе пынипе те чапа тухрӗ. Кунта выльӑх апатне перекетлӗ тыткалассишӗн кашни конюх, выльӑхсен фермисенче ӗҫлекен кашни работник кӗрешет.

Вӑрмар районӗнчи «Дружба» колхоз иккӗмӗш ҫул ӗнтӗ улӑма вакласа, йӳҫӗтсе е пӗҫертсе ҫитерет. Кунта ыраш улӑмӗ те пысӑк усӑллӑ апат пулса тӑрать. Ҫакӑн пек колхозсене ытти районсенчен те нумай илсе кӑтартма пулать.

Анчах та выльӑх апатне шутламасӑр, перекетсӗр тыткалакансем те нумай-ха. Иртнӗ хӗлле выльӑх апачӗ ҫителӗксӗр пулнипе хӑшпӗр колхозсенче выльӑх шучӗ чылай чакрӗ. Тӳррипе каласан, чылай колхозсенче выльӑх апачӗ ҫителӗклӗ пулнӑ. Анчах ӑна хуҫасӑррӑн, перекетсӗр тыткаланӑ. Ҫавӑн пек йӗркесӗрлӗхсене хӑшпӗр ҫӗрте кӑҫал та тӗл пулма пулать-ха.

Октябрьски районри «Коммунизм» колхоз кӑҫал вӑйлӑ тырпул туса илнӗ, выльӑх апачӗ те ҫителӗклӗ хатӗрленӗ. Колхозри выльӑхсене тутӑ хӗл каҫарма пур условисем те ҫителӗклӗ. Анчах выльӑх апатне мӗнле тыткалаҫҫӗ-ха кунта? Йӗркесӗр, перекетсӗр тыткалаҫҫӗ. Лашасене каҫхине ирхинеччен ҫимелӗх утӑ пӑрахса параҫҫӗ те, конюхсем вара тул ҫутӑличченех ҫывӑраҫҫӗ. Лашасем малтанлӑха суйласа ҫиеҫҫӗ, тӑккаласа пӗтереҫҫӗ, кайран вара выҫӑ тӑраҫҫӗ. Лашасем тӑккаланӑ утта кунта, урӑх ҫитерме ҫук тесе, кӑмакара ҫунтараҫҫӗ. Ҫак районри «Единство» колхозра ӗнесемпе сурӑхсене, пурне те пӗрле, ферма картишне апат пӑрахса параҫҫӗ. Выльӑхсем пӗрне пӗри тӗкеҫҫӗ, апата таптаса ватаҫҫӗ, вараласҫӗ. Ҫапла вара вӑйсӑррисем апатсӑр юлаҫҫӗ, ҫав вӑхӑтрах выльӑх апачӗ нумай сая каять.

Первомайски районри Молотов ячӗпе тӑракан колхозра ыраш улӑмне уйранах кам ӳркенмен, вӑл ҫӗкленӗ. Ҫапла майпа кунта 20 ҫӗмел ытла саланса пӗтнӗ.

Красноармейски районри «12 лет Октября» колхозра 30 пӑт ытла ҫӗрулмине шӑнтса, ҫӗртсе пӗтернӗ. Выльӑх апатне кунта шутлӑн, перекетлӗн тыткаламаҫҫӗ. Кашни кун пӗр тӗрлӗ апат ҫитереҫҫӗ. Арпапучах пӗтиччен, ӑна ҫитернӗ, унтан утӑ ҫине куҫнӑ, вӑл пӗтсен, улӑм ҫине куҫаҫҫӗ. Улӑма пӑтратса ҫитересси ҫинчен халӗ шутламаҫҫӗ-ха. Асӑннӑ колхозсенчи йӗркесӗрлӗхсем выльӑх апачӗ ҫине хуҫасӑрла пӑхнине кӑтартса параҫҫӗ.

Халӗ вӑрҫӑ пырать. Вӑрҫӑ вӑл хуҫалӑхра пур япалана та перекетлӗ тыткалама хушать. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пур тӗрлӗ хуҫасӑрлӑхпа тирпейсӗрлӗхе хирӗҫ те ҫине тӑрса кӗрешмелле.

Колхозра пӑру, сысна ҫури е ытти выльӑх вилсен, колхоз правленийӗн ларӑвӗнче сӳтсе яваҫҫӗ. Ку тӗрӗс, ӑна сӳтсе явмалла, айӑплисене ответ тыттармалла. Анчах колхозра ырханланса кайнӑ пирки юрӑхсӑра тухнӑ выльӑхсене пусма пани ахалех иртсе каять, уншӑн айӑпли ответ тытмасть. Ҫакна вара тӗрӗс тесе йышӑнма ҫук. Выльӑха вӑхӑтра ҫитерсен, шӑварсан, лайӑх пӑхсан, зоотехникӑпа ветеринари правилисене пурнӑҫласа пырсан, вӑл ырханланмасть, самӑр та вӑйлӑ пулать. Ун пек выльӑх тӗрлӗ чир-чӗрсемпе сайра чирлет е чирлесен те чире парӑнмасть.

Выльӑх вӑйлӑ та мӑнтӑр пултӑр тесен, ӑна тутӑ тытмала, выльӑхсене тӗрлӗ апат улӑштарса памалла, йӑлӑхиччен пӗр тӗслӗ апат ҫитерни тӗрӗс пулмасть.

Райҫӗрӗҫ пайӗнчи тата участоксенчи зоотехниксен, выльӑхсене мӗнле апат, хӑҫан тата мӗн чухлӗ ҫитермеллине кӑтартса, кашни колхозрах ҫирӗп йӗрке туса памалла. Ферма заведующийӗсем, старши конюхсем вӑл йӗркене пӗр пӑркаланмасӑр пурнӑҫласа пымалла. Колхоз председателӗсем тата правлени членӗсем выльӑхсене мӗнле апатлантарнине, выльӑх апатне перекетлӗ тыткаланине тӗрӗслесех тӑмалла. Шултӑра апатсене вакласа, пӗҫертсе е йӳҫӗхтерсе памалла.

Выльӑхсене валли уйӑрнӑ апат пӗтӗмпех выльӑхсем умӗнче пулмалла. Выльӑх апатне типтерсӗр салатса, ҫӗртсе е шӑнтса пӗтерекенсемпе кӗрешмелле, айӑплисене пӗр хӗрхенмесӗр ответ тыттармалла.

Выльӑхсене тӑрантарас ӗҫре ҫирӗп йӗрке тумалла. Кашни конюх е фермӑра ӗҫлекен работник выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана пурнӑҫлас ӗҫре вӑл колхозниксем умӗнче кӑна мар, фронт умӗнче те ответлӑ пулнине яланах асра тытса тӑтӑр.

И. В. Сталин США посолне В. А. Гарриман господина йышӑнни

Декабрӗн 14-мӗшӗнче СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ И. В. Сталин Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Посолне В. А. Гарриман господина йышӑннӑ.

Йышӑнура СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ В. Г. Деканозов пулнӑ.

СТАЛИН Маршала

Мускав

Совет Союзӗ территорийӗнчен тухса кайнӑ чухне (кунта ӗнтӗ ҫӗнтерӳ тӑвассишӗн вӑл ҫав тери тӑрӑшни тата жертвӑсем тӳсни лайӑх курӑнать) эпӗ Сире, г-н Маршал, Совет правительстви пире лайӑх йышӑннӑшӑн чӗререн тав тӑватӑп тата пӗр-пӗрне пулӑшасси ҫинчен пакт тунӑшӑн эпир Франци правительствипе тата халӑхӗпе пӗрле савӑнни ҫинчен пӗлтеретӗп.

Пирӗн союза Российӑпа Францин вӑрҫӑ ӗҫӗсене Пӗрлешӳллӗ Нацисен ӗҫӗсемпе тата лайӑхрах пӗтӗҫтерме тунӑ. Вӑл икӗ халӑха ӳлӗмрен ҫакӑн пек катастрофӑран упраса тӑма пулӑшмалла.

Генерал де ГОЛЛЬ.

В. М. МОЛОТОВ господина

Мускав

Совет чикки урлӑ каҫас умӗн эпӗ Сире хамӑра ӑшшӑн кӗтсе илнӗшӗн тав тӑватӑп тата Эсир хастарлӑн вӑрҫӑ вӑрҫнипе (ӑна ӗнтӗ эпир пур ҫӗрте те куртӑмӑр) эпир ҫав тери савӑнни ҫинчен пӗлтеретӗп.

Пирӗн икӗ ҫӗршывӑн интересӗсене яланах пӗр пек туса тӑчӑн пӗтӗҫтерекен союз пирӗн ҫӗнтерес кӑмӑла тата малашне мирлӗ пурнӑҫа упрас кӑмӑла ҫирӗплетӗ.

Жорж БИДО.

ПОЛЬША ХАЛАХӖН ИРӖКЛӖХ КОМИТЕЧӖН ПРЕДСТАВИТЕЛӖСЕМ МУСКАВРАН ТУХСА КАЙНИ

Декабрӗн 14-мӗшӗнче Польша Халӑх Совечӗн Председателӗ Берут господин, Польша Халӑхӗн Ирӗклӗх Комитечӗн Председателӗ Осубка-Моравский господин тата Роля-Жимерский генерал-полковник Мускавран Люблина тухса кайнӑ.

ВЦСПС-па пӗр Халӑх Комиссариатӗнче

ВЦСПС-па пӗр Халӑх Комиссариачӗ, предприятисен Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1944 ҫулхи ноябрь уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухса, Котов юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен завода иккӗмӗш премий, Слуцкий юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен завода виҫҫӗмӗш премий памалла тунӑ.

БЕЛОРУССИ МАСТЕРӖ ТУНӐ ИЛЕМЛӖ ЯПАЛАСЕМ

Вӑрҫӑччен Белоруссире илемлӗ япаласем тӑвас ӗҫ нумай саралнӑ пулнӑ. Фашистла нимӗҫ вӑрӑ-хурахӗсем ҫавӑн пек япаласем тӑвакан предприятисене ишсе хӑварнӑ. Халӗ вӗсене юсаса хута яраҫҫӗ. Темиҫе вунӑ артель ӗҫлеме пуҫланӑ ӗнтӗ. Вӗсем пӗр ушкӑн япала туса панӑ та ӗнтӗ.

Республикӑри нумай районсенче промысла артелӗсем, авалхи мастерсен опычӗпе усӑ курса, сӗтел ҫиттисене, салфеткӑсене, коверсене, пуҫ тутрисене килте тӗртсе илемлетес ӗҫе организацилеҫҫӗ.

Тӑмран савӑт-сапа тӑвакан артельсем те ӗҫлеме пуҫлаҫҫӗ. (ТАСС).

Чугун ҫулсем хӗллехи вӑхӑтра та лайӑх ӗҫлеме тивӗҫлӗ

ВКП(б) райкомӗсемпе хула комитечӗсен секретарӗсен тата чугун ҫул дистанцийӗсемпе станцисен руководителӗсен канашлӑвӗ

КАНАШ, декабрӗн 15-мӗшӗ. (Телефонпа). Ӗнер кунта республикӑри чугун ҫулсем иртсе каякан районсемпе хуласенчи ВКП(б) райкомӗсемпе хула комитечӗсен секретарӗсен канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлура Улатӑр, Шупашкар, Канаш дистанцийӗсен начальникӗсем тата чугун ҫул станцийӗсен руководителӗсем те пулчӗҫ.

Канашлура ВКП(б) Чӑваш Обком секретарӗн промышленноҫпа транспорт енӗпе ӗҫлекен заместителӗ М. Репкин юлташ доклад туса пачӗ. Вӑл хӑйӗн докладӗнче чугун ҫул иртсе каякан районсенчи партипе совет организацийӗсем умӗнче чугун ҫулсене хӗллехи вӑхӑтра пулӑшас тӗлӗшпе тӑракан задачӑсем ҫинчен каласа пачӗ, хӗллехи вӑхӑтра чугун ҫулсене юртан тасатас енӗпе тумалли ӗҫсем ҫинчен чарӑнса тӑчӗ.

Вӑрмар районӗ Канаш дистанцине пулӑшас тӗлӗшпе начар мар ӗҫлет. Ҫав районри «Дружба» колхоз колхозникӗсем чугун ҫула юртан тасатма куллен пулӑшса тӑраҫҫӗ. Вӗсем чугун ҫулсен икӗ енӗпе лартмалли щитсене тума йывӑҫ материалсем хатӗрлес тӗлӗшпе те нумай пулӑшнӑ.

Доклад тӑрӑх пренире тухса каланӑ Улатӑр дистанци начальникӗ Макаров юлташ Улатӑр районӗпе хулинчи ӗҫсыннисем чугун ҫула мӗнле пулӑшни ҫинчен каласа кӑтартрӗ.

— Чугун ҫулсене юртан тасатма пулӑшас ӗҫе пур районсем те активлӑн хутшӑнмаҫҫӗ-ха,—тет Канаш дистанцийӗн начальникӗ Светоозерский юлташ. — Куславкка районӗнчи колхозсем чугун ҫул ҫинче ӗҫлеме 245 ҫын тата 22 лав яма ыйтсан, пурӗ те 28 ҫын ҫеҫ янӑ. Ҫавӑн пекех Ҫӗрпӳ районӗ те 150 ҫын вырӑнне 73 ҫын ҫеҫ янӑ. Ҫӗрпӳ станцине халӗ те юртан тасатса пӗтермен. Ҫавна пула вара поездсене ҫӳретес ӗҫре чӑрмавсем пулаҫҫӗ.

Чугун ҫулсене юртан тасатас ӗҫре Канаш хулинчи ӗҫсыннисем тата Канаш районӗнчи «Красное пламя» колхоз колхозникӗсем начар мар ӗҫлеҫҫӗ.

Пренире Ҫӗмӗрле тата Ҫӗрпӳ районӗсен представителӗсем тухса каларӗҫ. Вӗсем чугун ҫулсене пулӑшас тӗлӗшпе хӑйсен районӗсем мӗнле ӗҫлени ҫинчен каласа пачӗҫ.

Канашлу чугун ҫулсене хӗллехи вӑхӑтра лайӑх ӗҫлеме пулӑшмалли мероприятисене палӑртса хӑварчӗ.

И. КОВАЛЕНКО.
Канаш узелӗнчи партком секретарӗ.

Чугун ҫул валли—вутӑ

Кольцовка колхозникӗсем хӑйсен сӑмахне пурнӑҫа кӗртрӗҫ

ВӐРНАР. Кольцовкӑри Ленин орденлӗ Сталин ячӗпе тӑракан колхоз колхозникӗсем кӗркуннехипе хӗллехи вӑхӑтра вӑрман хатӗрлемелли плана срокчен тултарас тӗлӗшпе пуҫарнӑ социализмлӑ ӑмӑрту вӑрманта ӗҫлекенсем хушшинче анлӑн саралса пырать. Колхозсем тата вӑрманта ӗҫлекен уйрӑм ҫынсем конкретлӑ обязательствӑсем илнӗччӗ. Халӗ вӗсем ҫав обязательствӑсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пыраҫҫӗ.

Кольцовка колхозникӗсем чугун ҫул валли 1.400 кубометр вутӑ хатӗрлесе турттарса кӑлармалли плана декабрӗн 5-мӗшне—Конституци кунӗ тӗлне ытлашшипех тултарчӗҫ. Пӗтӗмпе 1423 кубометр касса хатӗрленӗ тата 1418 кубометр турттарнӑ. Халӗ планран иртгерсе вутӑ хатӗрлессишӗн кӗрешеҫҫӗ. Хапӑсри «Советская деревня» колхоз та ҫак кунсенчех плана тултарса ҫитерет.

Ҫавӑн пекех Калинино районӗнчен килнӗ, Пинер лесопунктӗнче ӗҫлекен колхозсем те ӑмӑртура кая юлмаҫҫӗ. Услапари «Броневик» колхоз плана хатӗрлес енӗпе 120 процент, турттарас енӗпе 68 процент тултарчӗ. Малтикасри «Пӗрлешӳ» колхоз хатӗрлессипе 102 процент, турттарассипе 82 процент, Туҫи Мӑратри «Клезер» колхоз хатӗрлессипе 90 процент, турттарассипе 68 процент, Хурӑн Кӑкшӑм колхозӗ хатӗрлессипе 70 процент, турттарассипе 72 процент тултарчӗҫ. Ҫапла вара Пинер вӑрман пункчӗ хӑйӗн планне декабрӗн 10-мӗшӗ тӗлне хатӗрлес енӗпе 101 процент, турттарас енӗпе 68 процент тултарма пултарчӗ.

Ӗҫ тухӑҫлӑхӗ те кулленех ӳсе пырать. Юлашки вӑхӑтра вӑрманта ӗҫлекен кашни ҫын куллен 2.64 кубометр таран касса хатӗрлеҫҫӗ тата 3.5 кубометр таран турттарса кӑлараҫҫӗ. Лучкистсем Е. Прокопьев, Н. Ундрицов, С. Герасимов куллен 7—8 кубометр вутӑ касса хатӗрлеҫҫӗ. Ундрицовпа Герасимов юлташсем кӗркуннехипе хӗллехи сезонра кашниех 1000-шер кубометр вутӑ касса хатӗрлеме пулчӗҫ.

Услапари «Броневик» колхоз членӗсем пысӑк тухӑҫлӑхпа ӗҫлеҫҫӗ. Вӑрман ӗҫлекенсене колхоз председателӗ Федоров юлташ хӑй ертсе пырать. Ку колхозран пынӑ ҫынсем пурте нормӑна иртгерсе тултараҫҫӗ. М. Николаева, А. Федорова, К. Митрофанова колхозницӑсем нормӑна кулленех 160—170 процент таран тултарса пыраҫҫӗ.

Вӑрманта ялан ӗҫлекенсем хушшинче комсомолецсемпе ҫамрӑксем Д. Иванова, М. Солина, М. Андреева юлташсем ертсе пыракан бригадӑсем начар мар тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ.

Анчах калас пулать, чугун ҫул валли вутӑ хатӗрлесси ҫапах та ҫителӗксӗр пырать-ха. Хӑшпӗр колхозсем ҫак питех те кирлӗ ӗҫе хакламасӑр тӑраҫҫӗ. Вӗсем ӗҫ вӑйӗ кирлӗ чухлӗ ярса тӑмаҫҫӗ. Ҫавна пула леспромхоз та плана вӑхӑтра тултараймасть. Вӑрнар районӗнчи Мӑн Турхан, Шалти Пӑртас, Чӑрӑшкас Мӑрат, Кив Мелӗш, Уравӑш, Ҫӗрпел колхозӗсем начар ӗҫлеҫҫӗ.

Еф. ВОЛКОВ.

ВЛКСМ Обкомӗнче тата Чӑваш АССР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗпе Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатӗнче

Шкулсен ялхуҫалӑх ӗҫӗнчи Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн итогӗсем ҫинчен

ВЛКСМ Обкомӗ тата Чӑваш АССР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗпе Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ шкулсен ялхуҫалӑх ӗҫӗнчи Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн итогӗсене пӑхса тунӑ.

Уйхир ӗҫӗсене республикӑри 7.235 учительпе 138 пин вӗренекенрен 4.934 учитель тата 80.366 вӗренекен хутшӑнса ӗҫленӗ. Кӑҫалхи июнь уйӑхӗпе октябрь уйӑхӗсем хушшинче учительсем 262.252 ӗҫкунӗ, вӗренекенсем 2 миллион та 513 пин ӗҫкунӗ ытла тунӑ.

Колхоз уйхирӗсенче шкул ачисен 431 бригади ӗҫленӗ, вӑл бригадӑсенче пурӗ 7.749 вӗренекен пулнӑ. Унсӑр пуҫне пучах-сем пухма 433 бригада тунӑ.

Шкул ачисене ялхуҫалӑх ӗҫӗсене хутшӑнтарас тӗлӗшпе тӗнӑ ӑмӑртура уйрӑмах Кувакино, Ҫӗрпӳ, Вӑрмар, Комсомольски тата Советски районсем лайӑх ӗҫленӗ.

Ялхуҫалӑх ӗҫӗсенче Кувакино районӗнчи Турдакасӑри ҫичӗ ҫул вӗренмелли тата Мишуковӑри вӑтам шкулсем, Калинино районӗнчи Уйкас Юнтапари вӑтам шкул, Ҫӗрпӳ районӗнчи Старакри тата Виҫикассинчи вӑтам шкулсем, Октябрьски районри Шӗнерпуҫӗнчи тата Красноармейски районри Мӑн Шетмӗри вӑтам шкулсем, Советски районри Хучашри вӑтам шкул лайӑх тӗслӗхсем кӑтартса ӗҫленӗ.

Шкул ачисем колхозсенче тракторӗстсем, плугарьсем, сӳрелекенсем, утӑ ҫулакансем, тырӑ выракансем пулса тата ытти ҫӗрте те ӗҫленӗ. Кӗҫӗн ҫулхи ачасем пучахсем пухнӑ. Учительсем шкул ачисен ӗҫӗсене йӗркелесе пынӑ.

ВЛКСМ Обкомӗ тата Чӑваш АССР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗпе Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ ялхуҫалӑх ӗҫӗнче мала тухнӑ шкулсене, отрядсене, учительсемпе вӗренекенсене тата социализмлӑ ӑмӑртӑва лайӑх организацилесе ертсе пынӑ ВЛКСМ комитечӗсемпе ҫутӗҫ органӗсене премисем пама тӑратнӑ.

Пӗррӗмӗш премие илме Кувакино районӗнчи **Турдаковӑри** ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкула (директорӗ **Тихонова** юлташ, комсомол организацин секретарӗ **Просвирина**, старши вожатӑй **Ларина** юлташсем) тӑратнӑ. Ку шкулта вӗренекенсем, 65 ача, октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне 11006 ӗҫкунӗ тунӑ. Вӗсем пур ӗҫсене те пысӑк пахалӑхпа туса пынӑ, дисциплинӑллӑ пулнӑ. Шкул ачисем колхозниксемпе колхозницӑсем хушшинче массӑллӑ-политикӑллӑ ӗҫе туса пынӑ ҫӗре те хутшӑннӑ.

Иккӗмӗш премисем илме ҫаксене тӑратнӑ: Кувакино районӗнчи **Мишуковӑри** вӑтам шкула (директорӗ **Юдин**, комсомол организацин секретарӗ тата старши вожатӑй **А. Морозова** юлташсем) тӑратнӑ. Ку шкулта 170 ача вӗренеҫҫӗ. Вӗсем учительсемпе пӗрле 18.120 ӗҫкунӗ тунӑ. Шкул ачисен 10 отрячӗ ҫу каҫиччен колхоз хирӗнче пысӑк пахалӑхпа ӗҫленӗ. Учительсемпе аслӑ классенче вӗренекенсем колхозниксем хушшинче агитаторсем пулса ӗҫленӗ.

Октябрьски районри **Шӗнерпуҫӗнчи** вӑтам шкула (директорӗ **Медведева**, комсомол организацин секретарӗ **Меркулов** юлташсем) тӑратнӑ. Вӑл шкулта вӗренекен 156 ача тата 8 учитель пурӗ 15.781 ӗҫкунӗ тунӑ.

Шкулти 21 вӗренекен уборка вӑхӑтӗнче хаҫатсем вуласа парас тӗлӗшпе ӗҫленӗ. Стена хаҫачӗсен тата боевой листоксен редакторӗсем пулса 5 вӗренекен ӗҫленӗ. 8 учитель бригадӑсенче массӑллӑ-агитациллӗ ӗҫе туса пынӑ Шкул колхозниксем хушшинче художествӑллӑ пултарулӑх вечерӗсем икӗ хутчен иртгернӗ.

Ҫавӑн пекех иккӗмӗш премие илме Ҫӗрпӳ районӗнчи **Старакри** вӑтам шкула (директорӗ **Алексеева**, комсомол организацин секретарӗ **Баранова** юлташсем) тата ҫав районри **Ивановӑри** ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулти шкул ачисен отрядне (руководителӗ **З. Львова** юлташ) тӑратнӑ.

Виҫҫӗмӗш премие илме ҫаксене тӑратнӑ: Советски районри **Хучашри** вӑтам шкула (директорӗ **Владимиров**, комсомол организацин секретарӗ **Ильин** юлташсем). Ку шкулта вӗренекенсенчен 49 ҫын агитаторсем, стена хаҫат редакторӗсем пулса ӗҫленӗ. Кӗҫӗн классенче вӗренекенсем 376 килограмм тырӑ пухнӑ.

Комсомольски районри **Хырхӗрринчи** ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулта вӗренекенсен отрядне (руководителӗ **Краснова** юлташ) тата Ҫӗрпӳ районӗнчи **Виҫикассинчи** вӑтам шкула (шкул директорӗ **Алексеев**, комсомол организацин секретарӗ **Макарова** юлташсем) тӑратнӑ.

Ӗҫре паха тӗслӗхсем кӑтартнӑшӑн Советски районри вӗренекенсене: Николай Евдокимова, Лидия Языковӑна, Василий Яраева, Иван Кузьмина, Евдокия Трофимовӑна, Геннадий Свешникова премисем илме кандидата тӑратнӑ. Вӗсем кашниех 200—300 ӗҫкунӗ тунӑ. Ҫавӑн пекех Октябрьскинчи вӑтам шкулта 7-мӗш класра вӗренекен Роман Симунина; Калинино районӗнчи вӗренекенсене Калашниковӑпа Васильева, Шӑмӑршӑ районӗнчен—Леонид Воронцовпа Иван Космовскине, Вӑрмар районӗнчен—Валентин Волкова, Иван Григорьева, Иван Федорова, Иван Захарова, Семен Платонова, Николай Степанова, Николай Васильева, Иван Васильева; Тӑвай районӗнчен—Василий Павловпа Василий Филиппова премилеме тӑратнӑ. Вӗсем пурте 200—250 ӗҫкунӗ тунӑ.

ВЛКСМ Обкомӗ тата Чӑваш АССР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗпе Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ шкул ачисене ялхуҫалӑх ӗҫне хутшӑнтарас тӗлӗшпе лайӑх ӗҫленӗ учительсене те премилеме тӑратнӑ. Вӗсен шутӗнче Калинино районӗнчен—П. Г. Григорьева, Л. Н. Никонова; Шӑмӑршӑ районӗнчен — Е. И. Муромцева; Кувакино районӗнчен — М. А. Назарова тата Вӑрмар районӗнчен—В. В. Щербакова юлташсем пур.

ВЛКСМ райкомӗсемпе районри ҫутӗҫ пайӗсенче ӗҫлекенсенчен ҫаксене премилеме тӑратнӑ: Кувакино районӗнчи Е. З. Палдыринӑпа В. И. Шишова юлташсене; Вӑрмар районӗнчен — А. И. Ивановпа К. П. Павлов юлташсене; ВЛКСМ Ҫӗрпӳ райкомӗн секретарьне А Федорова; Красноармейски районри Мӑн Шетмӗ вӑтам шкулӗнчи комсомол организацин секретарьне М. Алексеевӑна; Вӑрмар районӗнчи Пинерти ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкул директорне А. Сергеева тата ҫав шкулти комсомол организацин секретарьне А. Петрова тӑратнӑ.

УКРАИНАРИ СПОРТ ОБЩЕСТВИСЕМПЕ КРУЖОКӖСЕМ

Украинӑра центрти тата облаҫсенчи ирӗклӗ спорт обществисен 13 совечӗ тата вырӑнсенчи 4.000 ытла физкультура коллективӗсем ҫӗнӗрен ӗҫлеме пуҫланӑ. 1.200 стадионпа спорт площадкине ҫӗнӗрен уҫнӑ.

Ҫак кунсенче УССР Совнаркомӗпе Украинӑри коммунистсен партийӗн Центральный Комитечӗ Украинӑра спортпа физкультура ӗҫне лайӑхлатса вӑйлатасси ҫинчен постановлени йышӑннӑ. Массӑллӑ спорт ӗҫӗсен планне тунӑ тата йӗлтӗрҫӗсем, ялӑ вӗҫҫӗн ҫапӑҫакансем, ишекенсем, ГТО значкисчӗсем хатӗрлемелли заданисем панӑ. Стадионсене, физкультура ҫурчӗсене, спорт площадкисене хута ямалли майсене палӑртса хунӑ.

Одессӑпа Станиславра физкультура техникумӗсем уҫма йышӑннӑ. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровӗнчен

ДЕКАБРӖН 14-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Декабрӗн 14-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем Венгрире МИШКОЛЦ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата ҫурҫӗртерехре ҫаплах наступлени туса пынӑ, СЕРЕНЧ хулипе узловой чугун ҫул станцине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, БОДРОГ-КЕРЕСТУР, МАД, ОНД, МОНОК, ЧОВАД, РАСОНЫ, СОЛНОК, ФЕЛЬШЕВАДАО, САКАНИ, ГАЛВАЧ, СЕНДРЬО-ЛАД, БОРШОД, ЕДЕЛЕНЬ, ХОДАЙ, ЧАСТА, ДИОНОШ-ХОРВАТ, СУХА-КАЛЛО, ШАЙО-КАЗА ялӗсене тата БОДРОГ-КЕРЕСТУР, МАД, ВАДНА чугун ҫул станцийӗсене йышӑннӑ.

Декабрӗн 13-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче Венгрире МИШКОЛЦ хулинчен ҫурҫӗртерехри тата БУДАПЕШТ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехри районсенче пирӗн ҫарсем нимӗҫсемпе венгерсен 870 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Декабрӗн 13-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем нимӗҫсен 18 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 13 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Венгрире Мишколц хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. Тӑшман оборонин тӗреклетнӗ пункчӗшӗн—Серенч хулишӗн паян хаяр ҫапӑҫусем пулса иртнӗ. Нимӗҫсем, лайӑх позицисемпе усӑ курса, хытӑ хирӗҫ тӑрса ҫапӑҫнӑ. Пирӗн чаҫсем тӑшмантан аякран иртсе кайнӑ та гитлеровецсене хӗскӗчпе хӗстерсе лартнӑ. Гитлеровецсем, йывӑр ҫухатусем тӳссе, ним тӗлли-паллисӗр каялла чакнӑ. Серенч хулипе узловой чугун ҫул станцине туртса илнӗ чухне пирӗн ҫарсем трофейсем тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур. Мишколц хулинчен ҫурҫӗртерехре совет боецӗсем тӑшманӑн темиҫе контратакине сирсе янӑ, унтан гитлеровецсемпе ҫапӑҫса малалла кайнӑ та Сендрьо хулинчен 4 километр ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре ларакан Галвач ялне туртса илнӗ. Пирӗн ҫав районра кӗрешекен пӗр часть икӗ кун хушшинче 400 нимӗҫе ҫити вӗлерсе пӗтернӗ, 24 миномет, 28 пулемет тата ытти трофейсем те тытса илнӗ. Пирӗн чаҫсем Бодва тата Шайо шывӗсем урлӑ каҫса кайнӑ та, ҫитӗнӳве малалла вӑйлатса ярса, халӑх пурӑнакан чылай пунктсене туртса илнӗ.

Совет летчикӗсем тӑшман ҫарӗсемпе техникине бомбӑсем пӑрахса штурмланӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче кун каҫиччен нимӗҫсен 6 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Белоруссири 2-мӗш фронтра пирӗн ҫӗрлехи бомбардировщиксем тӑшманӑн Цеханув чугун ҫул станци районӗнче пӗр ҫӗре пухӑнса тӑнӑ ҫарӗсемпе техникине тапӑннӑ. Бомбӑсем пӑрахнипе пула, станцире пушарсем тухнӑ. Нимӗҫсен ҫар хатӗрӗсем тиенӗ вагонӗсем тата горючи цистернисем ҫуннӑ. Пушарсенче вӑйлӑ взрывсем пулнӑ.

* * *

Пултуск хулинчен кӑнтӑртарахра гварди кӗҫӗн лейтенанчӗ Лоншаков командир пулса ертсе пыракан разведчиксен ушкӑнӗ лопкӑсем ҫине ларса юханшывӑн тӑшман йышӑнса тӑракан хӗвеланӑҫ хӗррине каҫса кайнӑ. Совет боецӗсем тӑшман траншейисене вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та пӗр пулемета унӑн ҫумӗнчи 10 салтакпа пӗрлех пӗтерсе тӑкнӑ. Вара, пӗр гитлеровеца тыткӑна илсе, ним ҫухатусӑрах хӑйсен чаҫне таврӑннӑ.

* * *

Михальовце хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тӑшман ҫаплах контратакӑсем тунӑ. Нимӗҫсем вӑл района ҫӗнӗ вӑйсем куҫарса пынӑ та ӗнер ҫухатнӑ позицисене каялла туртса илме хӑтланнӑ. Пирӗн стрелковӑй подразделенисем, артиллеристсемпе минометчиксем персе пулӑшса тӑнипе, тӑшман контратакисене пурне те ӑнӑҫлӑн сирсе янӑ. Уйрӑм участоксенчи ҫапӑҫусенче алӑ вӗҫҫӗн тытӑҫа-тытӑҫа илнӗ. Нимӗҫ чаҫӗсене поражени тӳстернӗ, каҫ пулса килнӗ тӗлелле тӑшмана пысӑк ҫухатусем кӳрсе каялла хӑваласа янӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче нимӗҫсен персе ҫӗмӗрнӗ хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 6 туппи тата салтакӗсемпе офицерӗсен виллисем нумай выртса юлнӑ. Совет боецӗсем трофейсем тытса илнӗ, 30 гитлеровеца тыткӑна илнӗ.

* * *

Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн авиацийӗнчи торпедӑсем пӑрахакан самолет Данциг бухтинче тӑшманӑн 6 пин тонна таякан транспорчӗ ҫине торпеда пӑрахнӑ, транспорт шыва путнӑ. Нимӗҫсен тепӗр транспортне Балтика флочӗн карапӗсем уҫӑ тинӗсре путарнӑ.

* * *

Венгерсен тыткӑна лекнӗ салтакӗсемпе офицерӗсем нимӗҫ ҫарӗ Венгрире ҫав тери ирсӗр ӗҫсем туни, халӑха ҫаратни тата пусмӑрлани ҫинчен каласа кӑтартаҫҫӗ. Венгерсен 2-мӗш горнострелковӑй бригадин 2-мӗш батальонӗнчи 2-мӗш ротин тыткӑна лекнӗ командирӗ капитан Данил Мобша ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Каялла чакакан нимӗҫ ҫарӗсем венгерсенчен вӗсен пӗтӗм пурлӑхӗпе выльӑх-чӗрлӗхне тытса илеҫҫӗ. Хресченсем хӑйсен пурлӑхне парасшӑн пулмасан, нимӗҫсем вӗсене пӗр хӗрхенсе тӑмасӑр пӗтереҫҫӗ. Эпӗ хам куҫпах гитлеровецсен пӗр тискер усал ӗҫне куртӑм. Эпӗ пӑхса тӑнӑ чухнех нимӗҫ салтакӗсем Неметвагаш ялне ҫунтарса ячӗҫ, ялти ҫынсене нумайӗшне пере-пере пӑрахрӗҫ».

Венгерсен 2-мӗш бронетанковӑй дивизийӗнчи 3-мӗш мотополкӑн 1-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ кӗҫӗн лейтенант Фараго ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Нимӗҫ салтакӗсем Венгри халӑхне ҫаратаҫҫӗ. Вӗсем кӗперсене сиктере-сиктере яраҫҫӗ, мирлӗ ҫынсен пӳрчӗсене ҫунтарса яраҫҫӗ. Кашни ялтах хресченсем Венгри офицерӗсене нимӗҫсен ирсӗр ӗҫӗсем ҫинчен темӗн чухлӗ жалоба паратчӗҫ. Эпӗ хам ҫакна куртӑм: хресченсем батальон командирне Фэвенеши майора йӗри-тавра ҫавӑрса илчӗҫ те нимӗҫ чаҫӗсем вӗсен лашисене, килти ӑнӑха тата ытти тӗрлӗ япаласене те туртса илни ҫинчен каласа кӑтартрӗҫ».

Венгерсен 1-мӗш полкӗн 1-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ салтак Янош Бамоц ҫапла каласа панӑ: «Нимӗҫсем Венгрирен мӗнпур хаклӑ япаласене турттарса каяҫҫӗ: выльӑх-чӗрлӗх, апат-ҫимӗҫ, оборудовани, автомобильсем. Нимӗҫ салтакӗсем ҫараҫҫисене, алӑксене, чӳречесене ҫӗмӗреҫҫӗ, пӳртсене кӗрсе кайса, мӗн илес тенӗ ҫав на ҫаклатса тухаҫҫӗ. Ҫул ҫинче вӗсем фронт ҫывӑхӗнчи районсенчен ирӗксӗр куҫарса каякан ҫынсене ҫаратаҫҫӗ. Ҫапла ҫаратнӑ пурлӑха нимӗҫсем, ҫав тери васкаса, автомашинӑсемпе тата чугун ҫул тӑрӑх та Германие ӑсатаҫҫӗ».

Чани ялӗнче гитлеровецсем чиркӗве ишсе антарнӑ. Ҫав ялти ҫынсем ҫырнӑ актра ҫапла каланӑ: «Эпир аяларах алӑ пуснӑ ҫынсем ҫак акта акӑ мӗн пирки ҫыртӑмӑр: нимӗҫ ҫарӗсем каялла чакма пуҫласан, эсэсовецсен дивизи командирӗ пире Чани ялӗнчен тухса кайма хушрӗ. Эпир вӑл хушнипе килӗшмерӗмӗр. Вара нимӗҫсем чиркӳ никӗсӗсем айне фугассем алтса хучӗҫ те чиркӗве сиктерсе ячӗҫ. Чани ял ҫыннисем—пастор Кушнер Иштван, нотариус Палкович Гейзо, нотариус Партоши Янош».

Финанс планне тултарса çитермелли уйăхлăх

Налог пухасси—уйăхлăхăн тĕп задачи

Укçа-тенкĕ пухмалли плана тултарас ĕçре налог пухасси тĕп вырăн йышăнса тăрать. Хăшпĕр налогсене пухмалли срокĕсем виççĕмĕш кварталтах иртнĕ. Çапла, ялти халăхран военнăй налог укçине ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне пухса пĕтермелле пулнă. Анчах декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне те пухса пĕтермен. Колхозсенчен подоходнăй налог укçине пухмалли срок та иртнĕ, [illegible] Вĕсене те пухса çитермен-ха. Декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне халăхран подоходнăй налог, хуласене пурăнакан ĕççыннисенчен военнăй налог тата пĕччен пурăнакансемпе сахал çемьеллĕ çынсенчен илекен налог укçине пухса çитермелле. Çаксене пухассине [illegible] пырать-ха.

Налог укçине пухас ĕçре [illegible] финанс органĕсем, налог инспекторĕсем тата налог агенчĕсем [illegible] парăмсене вăхăтра палăртмаççĕ. Хăшпĕр налог агенчĕсем кам мĕн чухлĕ тӳлемеллине те пĕлмеççĕ. Налог инспекторĕсем вара агентсене хăйсен ĕçне вăхăтра пурнăçа кĕртсе пыма пулăшмаççĕ, вĕсен ĕçне куллен тĕрĕслесе пымаççĕ. Районри финанс отделĕсем те парăмсене пухас ĕçе налог агенчĕсем тăвасси çине шанса лараççĕ.

Налог укçине пухас ĕçри тепĕр çитменлĕх вăл — государство умĕнчи парăмсене вăхăтра тӳлемен çынсем тĕлĕшпе совет законĕсене çирĕппĕн пурнăçламанни пулать. Çавна пула вара государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçлама тăрăшман çынсем парăмсене тӳлессине вăраха тăсса пыраççĕ. Апла пулин те, финанс работникĕсем парăмсене шыраса илес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмаççĕ. Районсенчи финанс отделĕсем те çакăнпа килĕшсе тăраççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ Йĕпреç, Улатăр, Канаш, Комсомольски, Хĕрлĕ Чутай тата ытти хăшпĕр районсемпе хуласенче налог укçине пухас ĕçре темиçе миллионшар тенкĕ парăмсем шутланаççĕ.

Налог укçине пухас тĕлĕшпе пулнă парăмсене пĕтересси актив ĕçĕнчен чылай килет. Хăшпĕр налог агенчĕсем, ялти е районри активпа хирĕçес мар тесе, вĕсенчен парăмсене вăхăтра ыйтмаççĕ. Парăмсене вăхăтра тӳлеменнисем хушшинче ялсовет председателĕсемпе секретарĕсене, колхозсен председателĕсемпе счетоводĕсене, бригадирĕсене курма пулать. Паллах, ун пек активистсем финанс планне тултарас ĕçре пулăшма та пултараймаççĕ.

Налог укçине вăхăтра пухманни районсене работникĕсене, учительсене, врачсене, агрономсене тата ытти специалистсене ĕç укçи парас ĕçе чăрмав кӳрет. Хăшпĕр районсенче ку ĕçе укçине ноябрь уйăхĕнче те тӳлемен. Апла пулин те, райсовет исполкомĕсемпе район финанс отделĕсем ку парăмсене тӳлес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмаççĕ. Ишлей районĕнче парăмсем 670 пин тенкĕ шутланаççĕ, çапах та райсовет исполкомĕн председателĕ Петров юлташ финанс планне тултарса çитермелли уйăхлăх вăхăтĕнче финанс отделĕн [illegible] налог инспекторне вăрман турттарма çĕре янă. Вутă турттарасси кирлĕ ĕç, анчах Петров юлташ вăрмана ĕçлеме финанс работникĕсемсĕр пуçне районра урăх çын тупма пултараймĕ-им вара? Паллах, пултарнă. [illegible] райсовет исполкомĕн руководителĕсем те парăмсене пухас тĕлĕшпе тимлĕн тăрăшмаççĕ-ха.

Хăшпĕр районсен руководителĕсем республикăн организацийĕсенчен укçа уйăрса пама ыйтаççĕ. Ку тĕрĕс мар. Районсенчи финанс отделĕсен тата райсовет исполкомĕсемпе хула совет исполкомĕсен çакна асра тытса тăмалла: районри бюджет валли кивçен панă укçана каялла республика бюджетне илеççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ укçа-тенкĕ пухассине тататăклăнах вăйлатмалла. Налог укçине пухас ĕçре пулнă парăмсене халех пĕтермелле.

Халĕ, 1944 çулхи финанс планне тултарса çитермелли уйăхлăх пынă вăхăтра, налог укçине пухса çитересси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Çакна тума пирĕн пур майсем те пур, тимлĕн ĕçлени çеç кирлĕ. Налог агенчĕсен çывăх вăхăтрах парăмсем пур çынсене пĕтĕмĕшпех шута илсе, вĕсен умне парăмсене çак кунсенчех парса татас ыйтăва çирĕппĕн лартмалла. Парăмсене вăхăтра тӳлеменшĕн законпа пăхнă чухлĕ укçа шыраса илмелле. Парăмсене тӳлессинчен пăрăнма пиккенекенсене закон тăрăх ответ тыттармалла. Райсовет исполкомĕсемпе районсенчи финанс отделĕсен колхоз председателĕсем умне колхозсенчен илекен подоходнăй налог укçине тӳлес пирки ыйтăва çирĕппĕн лартмалла. Парăмсене пухса çитерне налог агенчĕсене кая юлса пыракан ялсоветсем çумне çирĕплетмелле.

Паллах, укçа-тенкĕ пухас ĕçе халăх хушшинче массăллă-ăнлантарулла ĕçе кирлĕ пек йĕркелемесĕр ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыма май çук. Çак тĕлĕшпе финанс органĕсене партипе совет тата комсомол организацийĕсем, активистсем пысăк пулăшу пама пултараççĕ, памалла та.

И. ЗОЛОТНИКОВ,
Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ.

Ӳкерчĕк çинче: Муркаш районĕнчи «Красное Сормово» колхозăн старши конюхĕ А. В. Киселев юлташ. Вăл çак ĕçре 12 çул ĕçлет. Отечественнăй аслă вăрçă пынă çулсенче кăна вăл Хĕрлĕ Çар валли 26 лаша çитĕнтерсе панă.

Лаша ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсен республикăри семинарĕ

Декабрĕн 6-мĕшĕпе 12-мĕшĕ хушшинче Çĕрпӳ районĕнчи ăратлă ăйăрсен вити çумĕнче лаша ĕрчетес ĕçре малта пыракансен тата лашасем енĕпе ĕçлекен зоотехниксен республикăри семинарĕ пулса иртрĕ. Семинара 50 çынна яхăн пухăннă. Семинарăн тĕп задачи—ăратлă лаша фермисен заведующисемпе зоотехниксен пĕлĕвне ӳстерессн, вĕсене лаша ĕрчетес ĕçри паха опытсемпе паллаштарасси пулнă.

Семинарта çакăн пек докладсемпе лекцисем вуланă: лаша ĕрчетес ĕç республикăра мĕнле тăни тата çак ĕçе малалла лайăхлатасси çинчен; лашасене чуптарас кампание хатĕрленес тата ăна ирттерес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем; лашасене тĕштырă вырăнне ытти паха апатсемпе (çĕрулмипе, чĕкĕнтĕрпе, силоспа т. ыт. те) тăрантарасси çинчен; лашасемпе ĕçре усă курассин тĕп йĕркисем; майракаллă шултăра вылăхсене кӳлсе çӳреме вĕрентесси тата хуçалăхри ĕçре вĕсемпе усă курасси çинчен; çамрăк тихасене пăхса ӳстерессн; пĕтĕ кĕсресене пăхасси; час сарăлакан чирсемпе тата менингитпа кĕрешесси; кăрчанкă (кĕçĕ) чирĕпе мĕнле кĕрешмелле; ăратлă лашасене ĕрчетесси т. ыт. те.

Çак лекцисемпе докладсене Чăваш АССР Çĕр Ĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ И. В. Троицкий, Чăваш АССР Çĕр Ĕç Халăх Комиссариачĕн лаша ĕрчетес енĕпе ĕçлекен управленийĕн начальникĕ М. И. Мельников, зоотехник А. Рыбкин, ялхуçалăх наукисен кандидачĕ П. Бережная, Чăваш АССР Çĕр Ĕç Халăх Комиссариачĕн ветеринари управленийĕн главнăй врачĕ Н. Васильев тата ытти специалистсем ирттернĕ.

Юлашкинчен лаша ĕрчетес енĕпе малта пыракансем хăйсен ĕçĕнчи паха опытсем çинчен каласа панă. Çĕрпӳ районĕнчи çĕр ĕç пайĕн главнăй зоотехникĕ Кузьмин юлташ районра лашасене мĕнле пăхнине, ут таврашĕсемпе инвентарьсем юсавлине тĕрĕслеме ятарласа виçĕ ялан лăх комисси туни çинчен, вăл комиссисем кашни уйăхрах кашни колхозра тĕрĕслӳ туса ирттерни çинчен каласа панă. Çĕрпӳ районĕнчи «Новая жизнь» колхозри ăратлă лаша фермин заведующийĕ Карышев юлташ лашасене пăхас тата çамрăк тихасене сыхласа хăварас тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен каласа панă. Элĕк районĕнчи «Доброволец» колхозăн старши конюхĕ Фомилин юлташ тихасене çитĕнтерес ĕçри çитĕнӳсем çинчен каланă. Çĕрпӳри ăратлă лашасен витинче ĕçлекен старши зоотехник Рыбкин юлташ кăçал ăйăрсем чуптару кампанине лайăхрах тухни çинчен каланă. Çавăн пекех зоотехниксем Данилов (Первомайски), Захаров (Вăрнар), Федотова (Элĕк) тата ытти юлташсем те тухса калаçрĕç. Тухса каланă юлташсем çакăн пек семинара малалла та вăхăтран-вăхăта ирттерме сĕнӳ парса хăварчĕç.

Учительсем валли лекцисем

КӲКЕÇ. Çак кунсенче кунта Шупашкар районĕнчи учительсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура «Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă доклад тата приказ—Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕн гитлерла Германие татăклăнах çĕмĕрсе тăкассишĕн пыракан кĕрешӳри программи» темăпа ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн секретарĕ Токарев юлташ лекци туса панĕ. Лекци учительсене питĕ килĕш. рĕ. ВКП(б) Шупашкар райкомĕн секретарĕ Дмитриев юлташ Сталин юлташ доклачĕпе приказне вĕренес ĕç районри учительсем хушшинче мĕнле пыни çинчен тухса каларĕ. Вăл Сталин юлташ доклачĕпе приказне вĕренес ĕç районри учительсем хушшинче çителĕксĕр пулса пынине палăртрĕ.

Учительсен районри пухăвĕ çакăн пек лекцисемпе докладсем малашне те ирттерме ыйтрĕ.

С. АВЕРКИЕВ.

ЗАВОД ÇУМĔНЧИ ПЫСĂК ПРОМКОМБИНАТ

Икĕ çул каялла Киров заводĕ çумĕнче халăха куллен кирлĕ таварсем туса кăларма темиçе подсобнăй предприяти туса лартнă пулнă. Çак вăхăт хушшинче вĕсем питĕ пысăк комбинат пулса тăнă. Туса кăларакан япаласен хисепне тата йышне комбинат уйăхсеренех ӳстерсе пырать. Промкомбинат халăха сутма тĕрлĕ таварсем туса кăларать: пит çумалли супăнь, шăрпăк, мамăк хурса çĕленĕ сăхмансем, çăматăсем, брюкисем, шăл тасатмалли порошок, куçкĕскисем т. ыт. те.

Трахомăна пĕтерес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем

Трахома — ерекен чир. Октябрьти революциччен чăваш çыннисем хушшинче çав чир хытă сарăлни чăваш халăхĕ пурнăçпа йăлă тĕлĕшĕнчен начар условисенче пурăннинчен килнĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн вĕçĕнче трахомăпа чирлисене шута илни тăрăх, Бочковский профессор çакна палăртса панă: Çĕрпӳ уезĕнче пурăнакан пĕтĕм халăх хисепĕнчен трахомăпа чирлекенсем 70,02 процент, Шупашкар уезĕнче 55,26 процент тата Тетĕш уезĕнче (унта Елчĕк районĕн пĕр пайĕ кĕнĕ) 80,8 процент шутланнă. 1897-мĕш çулта Иванов тухтăр Çĕрпӳ уезĕнчи 10 пин çынна тĕрĕслесе пăхнă хыççăн çапла çырнă: «Чăвашсем хушшинче таса куç тупма йывăр. Пĕтĕм халăх шутĕнчен трахомăпа чирлисен хисепĕ, вăтамран илсен, 62 процент шутланать...»

Трахома чирĕ çавăн пек нумай сарăлни чăваш халăхĕн сывлăхĕшĕн питĕ пысăк хăрушлăх пулса тăнă. Апла пулин те, трахомăран сыватас ĕç питех те начар пулнă. Медицина учрежденийĕсем сахал пулнă, вĕсем халăха трахомăран сыватас тĕлĕшпе кăна мар, ытти чирсенчен сывалма та пулăшайман. Çавăнпа та трахома сарăлнă çемĕн сарăлса пынă.

Халăха трахомăран сыватас ĕçе революци хыççăн кăна анлăн организацилеме май пулчĕ. Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенче, партипе правительство халăх сывлăхĕшĕн куллен тимлĕн тăрăшнипе пула, медицина учрежденийĕсем нумай организациленĕ, медицина кадрĕсене йышлăн хатĕрленĕ. 1929 çултан пуçласа вара Чăваш республикинче трахомăран сыватасси массăллăн пулса пыма пуçларĕ. Çак ĕçе халăх сывлăхне тĕрĕслесе пухнă материалсене шута илни тăрăх йĕркелесе пынă. 1928 çулта 28 пин çынна тĕрĕсленĕ. Вĕсем хушшинче трахомăпа чирлекенсем 47,3 процент шутланнă. 1931 çулта 21.792 çынна тĕрĕсленĕ. Вĕсем хушшинче трахомлисем 34,6 процент пулнă. 1934-мĕшпе 1935-мĕш çулсенче, 1939 çулта тата 1943 çулта ирттернĕ тĕрĕслӳсем трахомăпа чирлекенсен хисепĕ çулсеренех чакса пынине кăтартса параççĕ. Çапла, трахомăпа чирлисем 1935 çулта тĕрĕсленĕ çынсен хисепĕнче 17,1 процент, 1939 çулта тĕрĕсленĕ çынсен хисепĕнче 14,2 процент пулнă пулсан, 1943 çулта тĕрĕсленĕ çынсен хисепĕнче вара 8,2 процент çеç пулнă.

Çӳлте кăтартса панă цифрăсем пирĕн республикăра халăха трахомăран сыватас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туни çинчен каласа параççĕ. Юлашкинчен, вăл цифрăсем трахомăран сыватасси Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче те малалла вăйланса пынине кăтартса параççĕ.

Иртнĕ çулсенче ерекен трахомăна пĕтерес тата çамрăксене трахомăран сыватас тĕлĕшпе сахал мар ĕçленĕ. 1931 çулта пĕрремĕшпе иккĕмĕш стадири трахомăпа чирлекенсем 35 процент ытла шутланнă пулсан, 1943 çулта вĕсен хисепĕ 15 процента çити чакнă. Çавăн пекех 1931 çулта тĕрĕслесе тухнă пĕр çултан пуçласа 8 çула çитиччченхи çамрăксем хушшинче трахомăпа чирлекенсем 29,5 процент шутланнă пулсан, 1943 çулта тĕрĕсленисем хушшинче чирлисен хисепĕ 7,1 процент çеç пулнă.

Трахома чирне пĕтерес тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсем партипе совет организацийĕсем вăл ĕç çине куллен те тимлĕн çавăрăнса пăхни çинчен каласа параççĕ. Парти Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ трахомăна хирĕç кĕрешес ĕçе ялан пысăка хурса хаклаççĕ. Вĕсем трахома чирне хирĕç кĕрешме, медицина учрежденийĕсен йышне ӳстерме, медицина кадрĕсене хатĕрлеме куллен пулăшса тăраççĕ. Медицина учрежденийĕсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслеççĕ. Медицина работникĕсем те хăйсен çĕршыв умĕнчи тивĕçне яланах асра тытса ĕçлеççĕ. Трахомăран сыватас ĕçре çĕнĕ майсемпе чылай усă курнă.

Эпир тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармА пултараймастпăр. Пирĕн трахома чирне пĕтĕмпех тата çывăх вăхăтрах пĕтермелле тăвас пулать. Çакна тума кирлĕ условисемпе майсем çителĕклĕ таранах пур. Партипе совет организацийĕсем куллен те тимлĕн тăрăшни, медицина учрежденийĕсен хисепĕ пĕрмаях ӳссе пыни, медицина кадрĕсене хатĕрлес ĕç вăйланса пыни,—çаксем пурте трахома чирне пĕтерессишĕн ăнăçлăн кĕрешме майсем туса параççĕ. Пирĕн республикăра хальхи тапхăрта трахомăран сыватакан сестрасен пункчĕсем 516 çĕрте ĕçлеççĕ. Унсăр пуçне врач пункчĕсем 17 çĕрте, фельдшер пункчĕсем 10 çĕрте, куç чирĕнчен сыватакан больницăсем 2 çĕрте тата трахома институчĕ ĕçлет. Трахома сестрисене хатĕрлес тĕлĕшпе те чылай ĕçсем туса ирттернĕ. Юлашки вăхăтра кăна 800 çынна сестрасем пулса ĕçлеме вĕрентсе хатĕрленĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕсем вырăнсенче ĕçлеççĕ ĕнтĕ.

Трахома чирне пĕтĕмпех пĕтерес ĕçре трахома чирĕнчен сыватакан пункт тĕп вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа та пирĕн, чи малтанах, çав пунктсен ĕçне лайăхлатмалла. Трахома чирĕнчен сыватакан пунктсем халăха тĕрĕслес, чирлисене сыватас, халăх хушшинче санитари пропагандине вăйлатас ĕçсене туса пыма тивĕçлĕ. Çак тĕлĕшпе вĕсене врачсен практикăллă пулăшу парса пымалла. Ку ĕнтĕ врачсем çине пысăк ответлăх хурать. Врачсем трахома чирне сыватмалли майсене вĕренмелле, унсăрăн вĕсем пулăшу пама та пултараймаççĕ. Трахома институчĕн тата куç чирĕнчен сыватакан больницăсен те, хăйсен ĕçне малалла лайăхлатса пырса, вырăнти учрежденисене ытларах пулăшу парса тăмалла.

Ялти врачсен республикăри съезчĕ республикăри медицина работникĕсене пурне те трахомăна пĕтерес ĕçе активлăн хутшăнса ĕçлеме чĕнсе каларĕ. Сывлăх Халăх Комиссариачĕн тата районсенчи сывлăх пайĕсен трахома сестрисен пункчĕсене врачсем пулăшса пырассине организацилемелле, пунктсен ĕçне лайăх организацилеме кирлĕ условисене туса памалла.

Партипе комсомол тата совет организацийĕсем те трахомăна пĕтерес тĕлĕшпе медицина учрежденийĕсене пысăк пулăшу пама пултараççĕ. Вĕсен çав ĕçе пĕтĕм обществоллă организацисене явăçтармалла, санитари пропагандине вăйлатма пулăшмалла, медицина учрежденийĕсене лайăх ĕçлеме условисем туса памалла. Çавăнпа пĕрлех тата медицина учрежденийĕсен, медицина работникĕсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе тăрса, çитменлĕхсене пĕтерме пулăшмалла.

Медицина работникĕсем, Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă докладпа хавасланса, хăйсен пĕтĕм вăйĕпе пĕлӳлĕхне халăх сывлăхĕшĕн кĕрешнĕ çĕре пама тăрăшаççĕ. Вĕсен патриотла çĕкленĕвне малалла аталантарса пырсан, партипе совет организацийĕсем куллен практикăллă пулăшу парса тăрсан, эпир трахома чирне çывăх вăхăтрах тата пĕтĕмпех пĕтерме пултаратпăр.

А. ШУЛЬПЕНКОВА.
Чăваш республикин тава тивĕçлĕ врачĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен çарĕсем, Юлих хулипе Дюрен хули секторĕнче тăшман хытă хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, Шопховен хулине тăшмантан тасатнă. Çавăн пекех тата Моншау хули районĕнче те малалла куçса пынă. Ретген хулинчен хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Роллесбройх хулипе Зиммерат хулине туртса илнĕ.

Саар шывĕ улăхĕнче Диллинген хули патĕнче тăшмана тапăнма тунă укреплени районĕнче тăшман артиллерийĕ союзниксен çарĕсене питĕ хаяррăн персе тăрать.

Габкирхен хулипе Блисбрюккен хули хушшинче союзниксен çарĕсем Блис шывĕ урлă каçса кайнă. Габкирхен хулинче тăшманпа урамсенче çапăçаççĕ. Мец хулинче ку таранччен нимĕçсен аллинче тăнă юлашки форта туртса илнĕ.

Çурçĕр Эльзасра Анат Вогез тăвĕсенчен хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем 3 миля малалла кайнă. Битш хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем Мажино линине татнă. Хагенау хулинчен çурçĕртерехре наступлени туса пыракан союзниксен чаçĕсем Зульц вăрманне тата ун çывăхĕнчи темиçе яла туртса илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Голландири тата Хĕвеланăç Германири вăрçă объекчĕсене чылайĕшне вăйлăн тапăннă.

ЛОНДОН, декабрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ декабрĕн 14-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Итали фронтĕнче 8-мĕш армири Канада чаçĕсем кун каçиччен вăйлă çапăçнă хыççăн хăйсен Ламоне шывĕ çинче тăшмана тапăнма тунă укрепленине аслăлатнă, тăшманăн вăйлă контратакисене сирсе янă. Çав укрепленин сылтăм флангĕнче Меццано ялне туртса илнĕ. Имол хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре 5-мĕш армири Англи чаçĕсем икĕ яла вăркăнса кĕрсе кайнă, халĕ вĕсем тăшманпа çав ялсенче çапăçаççĕ, тăшман хытă хирĕç тăрать.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн По шывĕ улăхĕнчи тата Бреннер ту каççинчи объекчĕсене тапăннă, çавăн пекех тата 5-мĕш арми фронтĕнче çĕр çинчи çарсене тăшманпа çапăçма пулăшса пынă.

Югославири çапăçусем

БЕЛГРАД, декабрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Хĕвелтухăç Боснире Маевица районĕнче нимĕçсемпе четниксен колоннине çĕмĕрсе тăкнă. Вишеград хулипе Сараево хули хушшинчи çул çинче çаплах вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Деветак хули секторĕнче 4 кун хушшинче нимĕçсемпе недичевецсен 650 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ е амантнă, трофейсем нумай тытса илнĕ. Ужица хули секторĕнче Югослави чаçĕсем нимĕçсен гарнизонне Вишеград хули патнелле чакма памасăр хăратса тăраççĕ.

Босна шывĕ улăхĕнче виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче 1.260 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлернĕ е амантнă. Хĕçпăшал тата боеприпассем нумай тытса илнĕ.

Черногорире Тара шывĕ çинче çаплах вăйлă çапăçусем пыраççĕ.

Германире асаплантарса вĕлернисем

ЛОНДОН, декабрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви Германи чиккинчен пĕлтернĕ тăрăх, Германире халĕ те çынсене асаплантарса вĕлереççĕ. Гитлера хирĕç тунă каварлашăва хутшăннисенчен пĕрне Герделера, Лейпциг хулин бургомистрĕ пулнăскере, çакса вĕлернĕ тесе пĕлтернĕччĕ, çакă тĕрĕс пулман. Халĕ ăна «сиплеççĕ», çавна пула унăн шухăш-кăмăлĕ вăйсăрланать. Çакăн пек майпа ирĕксĕрлесе гестаповецсем Герделера хăйĕн ĕçĕсем çинчен калаттарнă пулмалла. Ăна тĕпченĕ хыççăн промышленниксемпе пысăк предприятисен директорĕсене вуншар çынна арестленĕ. Вĕсене Герделерпа куçа-куçăн тăратса ыйтса пĕлнĕ.

Финанс министрĕ пулнă Попица çакса вĕлернĕ. Германири адвоката Ландберг доктора та, разведкăра службăра пулнăскере, Гиммлерăн тусĕ тата советникĕ пулнăскерне, çакса вĕлернĕ, мĕншĕн тесен вăл гитлерла пуçлăхсем çинчен ытлашши нумай пĕлнĕ.

Гиммлер кунсăр пуçне татах 200 çынна çакса вĕлернĕ, вĕсем хушшинче адвокатсем, интеллигенци представителĕсем, профессорсем пулнă. Гиммлерăн чи çывăх помощникĕсем—Кальтенбруннер, Шелленберг тата Мелле, хăйсен начальникĕ пекех юнлă ĕçсем тăваканскерсем, «хăрушсăрлăх служби» текенскерсене ертсе пыраççĕ. Çав службăн штабĕ Берлинăн кăнтăр пайĕнче вырнаçнă.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ÇĔНĔ РЕЗЕРВСЕМ ТУПАС ШУТПА ТЕПĔР ХУТ «ТОТАЛЬНĂЙ МОБИЛИЗАЦИ» ИРТТЕРЕÇÇĔ

ЖЕНЕВА, декабрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлерла агентство—Германин информаци бюровĕ çапла пĕлтерет: çарпа çар промышленноçĕ валли çĕнĕ резервсем тупас шутпа гитлеровецсем çĕнĕ мерăсем йышăнаççĕ. Çав агентство пĕлтернĕ тăрăх, Геббельс çар промышленноçне хĕрарăмсене 55 çула çитнисем таранах илмелле тунă. Ку таранччен ĕçленĕ професси шкулĕсене халь хупаççĕ. Промышленноçăн граждансем валли ĕçлекен пайĕнче, банксенче, конторăсенче, страховой тата администрациллĕ учрежденисенче çĕнĕрен мобилизаци ирттереççĕ. Çакăнпа пĕрлех Германире ĕç кунне татах та ӳстереççĕ. Çар промышленноçĕ валли чĕртавар тăратас шутпа халăха куллен кирлĕ таварсем тăвакан промышленноçа каякан чĕртавара татах чакараççĕ.

Грецири лару-тăру

ЛОНДОН, декабрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Паян кăнтăрла Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Скоби генерал пĕлтернинче çапла каланă: иртнĕ çĕрле Афинăра лăпкă пулнă, нимĕнле пысăк улшăнусем те пулман. Британи çарĕсем Пирейре пăртак малалла куçнă, анчах Афинăра тата пĕтĕм Грецире улшăнусем çук.

Вăрçă ĕçне асăрхаса тăракансем каланă тăрăх, ЭЛАС отрячĕсем çĕнĕ операцисем тума хатĕрленеççĕ. Граждансла халăха кăнтăрла 12 сехетрен пуçласа икĕ сехетчен кăна урамра çӳреме ирĕк панă.

Паян каçхине Лондонри радио çапла пĕлтернĕ: Афинăра лăпкăлăх пĕтнĕ. Хулан варринчи пайĕнче каллех снарядсем çурăлма пуçланă. Пулеметсемпе пени тата танксем çапăçни илтĕнет. Пирей районĕнче те çапăçаççĕ.

ГРЕЦИ ПИРКИ ПАНĂ ЫЙТУСЕМ ÇИНЕ ЧЕРЧИЛЛЬ ОТВЕТЛЕНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 14-мĕшĕнче общинăсен палатинче Грецири лару-тăру çинчен каллех прениссем пуçланнă, вĕсем çав ыйтăва лейбористсен партин конференцийĕ сӳтсе явнă хыççăн пуçланнă. Лейборист Давид Кирквуд Черчилль премьер-министра çакăн çинчен пĕлтернĕ: декабрĕн 14-мĕшĕнче ирхине Англири рабочисенчен— машиностроительсенчен питĕ нумай телеграммăсем илнĕ. Çав телеграммăсенче рабочисем Англи правительствин Грецири ĕçĕсене хирĕç протестлесе забастовкăсем пуçласа ярасси çинчен пĕлтереççĕ, тенĕ.

Çакăн умĕн общинăсен палатин членĕ Сеймур Кокс премьер-министртан çапла ыйтнă: правительство хăйĕн политикине Грецире хăçанччен тытса пыма шухăшлать? —тенĕ.

Хăйĕн ответĕнче Черчилль çапла каланă: правительство ячĕпе тухса каланă ораторсен сăмахĕсем çумне эпĕ нимĕн те хушса пама пултараймастăп, анчах кирлĕ пулсан, халăха çĕнĕрен чĕнсе калама пултарăп, тенĕ.

Общинăсен палатине Черчилль тата çакăн çинчен пĕлтернĕ: Англи флочĕ, авиацийĕ тата импери çарĕсем Грецие пырса кĕнĕ хыççăн ноябрь уйăхне çитиччен 300 çын çухатнă. Çак шута вилнисем, аманнисем, пĕр сас-хурасăр çухалнисем тата тыткăна лекнисем кĕреççĕ. Çакăн хыççăн Англи çарĕсенче тата 160 çын çухални çинчен калакан хыпарсем пур, тенĕ.

СТЕТТИНИУС КАЛАНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государство секретарĕ Стеттиниус, сенатăн ют çĕршыв ĕçĕсен комиссийĕнче тухса каласа, Америкăн тулашри политикин çак пилĕк задачине палăртнă: «Пĕрремĕшĕнчен, эпир пурнăçа кĕртекен тулашри политика вăрçа çĕнтерӳллĕн тата хăвăртрах вĕçлемешкĕн хамăрăн хĕçпăшаллă вăйсене чи пысăк пулăшу паракан политика пулмалла; иккĕмĕшĕнчен, Пĕрлешӳллĕ Нацисем çĕнтернĕ хыççăн Германипе Япони агрессиллĕ çĕнĕ вăрçă пуçлама хатĕрленме ан пултарччăр тесе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла; виççĕмĕшĕнчен, пулас ăрусем валли мир туса ăна, кирлĕ пулсан, хĕçпăшаллă вăйсемпе усă курса сыхласа тăрас тĕлĕшпе Пĕрлешӳллĕ Нацисен тивĕçлĕ организацине хăвăртрах туса çитермелле: тăваттăмĕшĕнчен, хамăрăн тулашри суту-илĕве тата ĕç тухăçлăхне ӳстерме, çавăн пекех пĕтĕм тĕнчери суту-илĕве аталантарма пулăшакан мерăсем йышăнасси çинчен калаçса татăлмалла. Пирĕн хамăр çĕршывра ĕç вăйĕпе ĕлĕкхи пекех пĕтĕмпех усă курма май пултăр, ытти Пĕрлешӳллĕ Нацисемпе пĕрле пĕрмаях аслăланса пыракан производствăна, потребление тата пурнăç условийĕсене лайăхлатакан тапхăра кĕмелле пултăр; пиллĕкмĕшĕнчен, тĕнчери пурнăçра кашни халăх йăлисемпе ирĕклĕ тăрăх пур çĕрте те ирĕклĕ тата демократиллĕ учрежденисене аталантарма пулăшакан условисене тĕреклетмелле».

Америка авиацийĕ Японие тапăнни

ЛОНДОН, декабрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, США çар министерстви çапла пĕлтернĕ: паян Америкăн «Вĕçекен крепость» йышши вăйлăран та вăйлă бомбардировщикĕсем Хонсю (Япони) утравĕ çинчи промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

А. А. Жданов „Финляндипе Совет Союзĕ" ятлă обществăн правлени членĕсене йышăннă

ХЕЛЬСИНКИ, декабрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 11-мĕшĕнче Союзниксен Контроль Комиссийĕн Председателĕ А. А. Жданов генерал-полковник «Финляндипе Совет Союзĕ» ятлă обществăн правленине йышăннă. Йышăнура обществăн хисеплĕ председателĕ премьер-министр Паасикиви, общество правленийĕн председателĕ финанс министрĕ Хело тата ыттисем те пулнă.

Вĕсем А. А. Жданова обществăн ĕçĕсемпе тата унăн çывăхри задачисемпе паллаштарнă. Обществăн хисеплĕ председателĕ премьер-министр Паасикиви хăй каланă сăмахра çак тĕлпулу мĕн тери паха пулнине палăртнă. Секцисен председателĕсем хăйсен секцийĕсен планĕпе паллаштарнă.

А. А. Жданов «Финляндипе Совет Союзĕ» ятлă обществăн правлени членĕсене общество ĕçĕсемпе тата унăн секцийĕсен планĕсемпе паллаштарнăшăн тав тунă. Вăл çапла каланă: Общество кĕске вăхăт хушшинчех нумай енлĕ анлă ĕçсем пуçарса янă. Хăйĕн программи тавра финн халăхĕн тĕрлĕ сийĕсенчи малта пыракан çыннисене пĕтĕçтерниpe вăл Финляндире обществопа культура тĕлĕшĕнчен паллă вăй пулса тăрать. Общество финн халăхне Совет Союзĕпе культура енчен çеç мар, пур енчен те—унăн государство, обществопа политика, социальнăй, экономика тата культурăллă пурнăçĕпе те паллаштарма тăрăшать. Малалла А. А. Жданов çакна палăртнă: Финлянди вăрçма пăрахни тата перемири çинчен килĕшӳ туни Финляндире прогреслă-демократиллĕ вăйсене Совет Союзĕпе туслă çыхăнусем тума пĕтĕçтернĕ. Çакă вăл историллĕ паллă вырăн йышăнса тăрать. Малта пыракан çав идейăсемпе çĕнĕ вăйсем (çак вăйсем хушшинче «Финляндипе Совет Союзĕ» ятлă общество паллă вырăн йышăнса тăрать), реакциллĕ вăйсемпе кĕрешсе, хăйсем валли çĕнĕ çул уçса пыраççĕ. Реакциллĕ çав вăйсем, нумай çулсем хушшинче пуç пулса тăрса, Финлянди политикине Совет Союзне хирĕç илсе пынă тата Финляндие юнлă вăрçа сĕтĕрсе кĕртнĕ.

Халăхсене пĕр-пĕринпе мирлĕ те туслă пурăнтарас хăйĕн политикине çирĕппĕн тытса пырса, СССР асăннă обществăн ĕçĕсене кăмăллăн сăнаса тăрать. Ирĕклĕ, никама пăхăнман, демократиллĕ Финляндипе Совет Союзĕ хушшинче туслăх пулни финн халăхĕн тĕп интересĕсемпе çыхăнса тăрассине эпир çирĕппĕн шанса тăратпăр.

Юлашкинчен А. А. Жданов обществăна хăйĕн ĕçĕсенче çĕнĕ çитĕнӳсем тума суннă.

БОЛГАРИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ КАЛАСА ПАНИ

СОФИЯ, декабрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Софири радио Болгари правительстви каланине панă. Унта çапла каланă:

«Болгари халăхĕ Отечественнăй фронтăн фашизма хирĕçле вăйĕсен пĕрлĕхне упрама палăртнине шута илсе тата сентябрĕн 9-мĕшĕнчи ĕçе тивĕçлипе вĕçлес тесе, Болгари правительстви çакна пĕлтерет:

1) Болгари халăхĕ пулăшнипе, Отечественнăй фронтăн программине çывăхри вăхăтрах пурнăçа кĕртес тесе, правительство татăклă мерăсем йышăнать.

2) Государство аппаратне фашистла саботажниксенчен тата тăшман агенчĕсенчен васкаса тĕппенех тасатас шутпа правительство фашистла элементсене хирĕç татăклăн та пĕр шелленмесĕр кĕрешĕ.

3) Халăх çарне тасатса çĕнетес ĕçре правительство çаксене асра тытĕ: ют шухăшсене тытса пыракансене, фашизм агенчĕсене тата офицерсемпе унтер-офицерсен составĕнчи çар преступникĕсене çартан хăваласа кăлармалла. Тасатăва кĕске вăхăт хушшинчех туса ирттермелле. Офицерсен ытти пайĕ çар умĕнче тăракан пысăк та паха задачăсене пурнăçа кĕртсе пыма хастарлăн хутшăнма пултартăр. Пĕчĕк айăпа çеç кĕнĕ çынсене çӳлтен хушнă пек тунă пирки айăпа кĕнĕ çынсене правительство çартах хăварма шутлать, активлăн ĕçлесе, вĕсем хăйсен айăпне касарттарма пултарччăр тесе шутлать. Офицерсен составĕ малашне çарта тивĕçлĕ вырăн йышăнма пултартăр тесе, чăн-чăн халăх командирĕсем пулма пултарччăр тесе, правительство пур кирлĕ ĕçсене те тăвĕ.

4) Хăйĕн малашнехи ĕçĕсенче правительство уйрăмăнах хуçалăхпа финанс ыйтăвĕсене татса пама тăрăшĕ. Хуçалăх йывăрлăхĕсене çăмăллатмашкăн, хуçалăх ĕçне вăйлатмашкăн, ĕçхалăх пурнăçне лайăхлатмашкăн правительство тивĕçлĕ законсем кăларĕ.

5) Хăйĕн пĕтĕм ĕçĕнче правительство Болгари халăхĕн пулăшăвĕ çине таянса тăма тăрăшĕ тата Отечественнăй фронтăн пĕрлĕхне çирĕплетме тивĕçлĕ мерăсем йышăнĕ. Çĕршыври йĕркелĕхе çирĕплетме тата вăрçа ăнăçлăн вĕçлеме правительство пĕтĕм вăйпа тăрăшĕ».

Шупашкар хула Совечĕн депутачĕсене пĕлсе тăма

1944 çулхи декабрĕн 21-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, Пионерсен Çуртĕнче (Карл Маркс урамĕ, 11) ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн 28-мĕш Сессийĕ уçăлать.

Сесси çак ыйтăва сӳтсе явать: «Хулара суту-илӳ ĕçĕ тата столовăйсенче апатланас ĕç мĕнле пыни çинчен» (Докладчик— Горсовет Исполкомĕн Председателĕн заместителĕ А. В. Киселев юлташ).

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн депутачĕсем сессие хăйсен удостоверенийĕсемпе кĕреççĕ.

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн Исполкомĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Халь уçăлакан электротехника техникумне çакăн пек работниксем кирлĕ: техникум секретарĕ, вĕренӳ пайĕн секретарĕ, комендант, бухгалтер, агент-кладовщик, истопниксемпе уборщицăсем, гардеробщиксем, дворник.

Ĕçукçи — килĕшнĕ тăрăх. Комендантă, дворнике тата истопнике хваттер параççĕ. Техникумра ĕçлекенсем столовăйра апатланаççĕ тата вĕсене завод магазинĕ çумне çирĕплетеççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. К. Маркса, 82.

Военторгăн Шупашкарти отделенийĕ бухгалтер-ревизор тата производство отделĕн старши бухгалтерĕ кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 2, Военторг, Отдел кадров.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительне — секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 04260 Типография № 1, Управления полиграфической промышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 18.000 экз.